Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

47 (8113) № * Юн кун, 2013 çулхи утă (июль) уйăхĕн 3-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Хресчен алă усса лармасть

Симĕс ĕç çи

**Улăх-çаранта утă уйăхĕ вăй илнĕ тапхăр. Ĕнер акара тимленĕ хресчен паян иртен пуçласа каçчен выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре вăй хурать. Уяр кунсенче çапла пулмалла та. Çĕр ĕçченĕ çак ĕçе çанă тавăрса кӳлĕннĕрен хатĕрленĕ апат калăпăшĕн кăтартăвĕ кунсерен ӳссе пырать. Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсем паянхи куна нумай çул ӳсекен курăксене 2841 гектар (46 процент) çинчен çулса пуçтарса илнĕ. Курăк çулассипе Чкалов яч. хис. тата «Колос» АПФ (100 процент), Е. Андреев яч. хис. (58 процент), «Свобода» (54 процент), Суворов яч. хис. (46 процент) тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ăнăçлă ĕçлесе пыраççĕ.**

**Утă уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне районти хуçалăхсем 3198 тонна (59 процент) утă, 1900 тонна (16 процент) сенаж янтăланă.**





Обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçмалăх выльăх апачĕ хатĕрлессипе ĕçсем епле пынипе паллашма «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативне çитрĕмĕр. Кăнтăрлахи шăрăхран пытанмасăр уй-хир ĕçченĕсем симĕс ĕç çинчеччĕ.

– Паян шăрăхран пытанмасан хĕл кунĕсенчи шартлама сивĕ те хăратаймĕ пире. Çакна шута илсе эпир паян иртен пуçласа мĕн каç пуличчен хуçалăх уй-хирĕсенче утă янтăлассипе тăрăшатпăр, – савăнăçлă кĕтсе илчĕ пире фермăна килекен рулонти утăна управа пуçтарса хурассипе ĕçлекен ушкăнти Георгий Курбанов.

Ферма заведующийĕ Раиса Блинова каланă тăрăх хуçалăх ĕçченĕсем уяр кунсемпе тухăçлă усă курса Патаккассинчи сĕт фермине 200 тонна ытла типĕтнĕ утă кĕртсе пама хевте çитернĕ те ĕнтĕ.

– Уяр кунсем тăраççĕ те утти-сенажне ытларах янтăласан та ытлашши пулмасть. Пире паха утă татах 150 тоннăна яхăн кирлĕ. Ыран е тепĕр кун сенаж хывма пуçлатпăр. Техника та, ĕçлекенсем те çак ĕçе тухма хатĕр. Пирĕн фермăна тулăх хĕл каçма сенажĕ те 2000 тоннăна яхăн кирлĕ. Ума лартнă тĕллевсене пурнăçлатпăрах тесе шутлатпăр. Çак ĕмĕтпе куллен ĕçе тухатпăр, – сăпайлăн калаçать Раиса Ананьевна.

Фермăна пыракан утăна тирпейлесе хурассипе эпир пынă кун Алевтина Кочнова, Елена Воробьева, Раиса Блинова, Нина Дмитриева, Валентина Гурьева, Георгий Курбанов ĕçлетчĕç **(сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)**.

Çитес хĕл валли хуçалăхри ĕç планĕпе пăхнă чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлессипе улăх-çаранта та паян самантлăха ĕç чарăнмасть. Валерий Замков пĕр чарăнмасăр тенĕ пек курăк çулать. А. Скворцов хăйне шанса панă кĕреплепе çулнă курăка тавăрса варкăштарсах тăрать, хăвăртрах типме пулăшать. Н. Гурьев вара типнĕ утăна рулона преслассипе тăрăшать. Вячеслав Замков янтă рулонсене тиесе ферма çывăхнелле ăсатать. Рулонсене турттарнă çĕрте С. Иванов **(сăн ӳкерчĕкре)**, М. Колбасов, В. Колбасов водительсем хастар.

Аталану çулĕпе каяс тесен вара мĕн палăртнине пурнăçламаллах. Орининсем çакна утă çинчи кашни ĕç кунĕпе çирĕплетеççĕ.

**А. БЕЛОВ.**

Республикăра

## Марафон вĕçленчĕ

Чăваш Енре çуллен ирттерекен «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕ вĕçленчĕ. Унта республикăри мĕн пур районсемпе хуласем активлă хутшăннă. Кăçал марафон çӳпçине пĕтĕмпе 8 млн та 233 пин те 719 тенкĕ пуçтарăннă. Иртнĕ çул ку хисеп 7 млн ытларах тенкĕ пулнăччĕ. Пухăннă укçа-тенкĕне нумай ачаллă тата сахал тупăшлă çемьесене пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшма, ача-пăча пултарулăх коллективĕсене республика тулашĕнчи конкурссемпе фестивальсене кайма, пултаруллă ачасене стипендисем тӳлеме уйăрĕç.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Ял уявĕсенче савăнчĕç

Юлашки çулсенче ял-урам уявĕсем ирттересси ырă йăлана кĕчĕ.

Иртнĕ уйăхра ял уявне Ятмансем ирттерчĕç пулсан, нумаях пулмасть Кашмашри А. Токарев урамĕнче пурăнакансем те хăйсем пĕлтĕр пуçарнă çĕнĕлĕхе малалла тăсрĕç. Иртнĕ çул урамра пурăнакансем электричество çути пулманнине пĕрлехи йышпа çĕнтерсе урам уявне йĕркелесе ячĕç. Кăçал та кунта Чăваш Республикин кунĕнче республика уявне халалласа хăйсен урам кунне ирттерессине ырă йăларах хăварас терĕç.

Çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче Ятмансемпе Кашмашсен эстафетине Очăкассисем алла илчĕç.

Ял уявне вырăнти чиркӳре ĕçлекен Алексей иерей пил панипе пуçланă. Ял клубне уяв ячĕпе савăнăçлă пухăва пухăннисене педагогика ветеранĕ Ф. Матвеева ял историйĕпе паллаштарнă. Инçетрен килнĕ ентешсем тăван ялсене ырă суннине, ял тăрăхĕн депутачĕпе Ю. Соловьевпа депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А. Иванов саламланине уява пынисем савăнăçлă йышăннă.

Уява ял клубĕн ертӳçи В. Сергеев тата ялти библиотекарь Р. Илларионова йĕркеленĕ.

## Туристсен слетĕнче

Йĕпреçре республикăри географи вĕрентекенсем хушшинче тăван ене лайăх пĕлекенсемпе туристсен «Манăн пĕчĕк тăван çĕр-шыв» слечĕ иртнĕ. Унта хутшăннă 7 команда шутĕнче Муркашсем те пулнă. Пирĕн ентешсем слетра çут çанталăк материалĕнчен хатĕрленĕ япаласен конкурсĕнче пĕрремĕш вырăнта пулнă. Чăрмавлă çулпа иртмелли ăмăртура та ырăпа палăрнă.

Муркашсен командине «Çĕнтерӳшĕн кĕрешнишĕн» дипломпа чысланă.

## Сăн ӳкерчĕксен конкурсĕ

2014 çулхи нарăс уйăхĕн 10-мĕшĕнче районăмăр 70 çул тултарать. Çав ятпа районта «Тăван енрен лайăхраххи çук» сăн ӳкерчĕксен конкурсне ирттереççĕ. Конкурс кăçалхи раштав уйăхĕн 30-мĕшĕччен пырать. Конкурсра 5 номинаци: «Мĕн çинчен калать кивĕ сăн ӳкерчĕк?», «Çăкăртан асли çук», «Яллă вырăна юрататăп», «Манăн мăнаçлăх», «Кулăшла сăн ӳкерчĕк».

Тăван ене юратакансем валли çул уçă.

## Нурлатра хăнара пулчĕç

Иртнĕ кунсенче Москакассинчи информаципе культура центрĕ çумĕнче йĕркеленнĕ «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ушкăнĕ, Муркашри ача-пăча искусство шкулĕ çумĕнчи «Калинка» тĕслĕх ташă ушкăнĕ тата Даша Макарова юрăç Тутар Республикинчи Нурлат хулинче Раççей шайĕнчи чăваш культурин «Уявне» пĕрремĕш хут хутшăнчĕç.

Уяв çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче питĕ чаплă илемлетнĕ уçланкăра иртнĕ. Унта хутшăннă пултарулăх ушкăнĕсем – çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчи чавашсем. Çав тери мăнаçлă та чаплă иртнĕ уява пирĕн ушкăн хутшăнма пултарни – Муркашсен савăнăçĕ. Пирĕн юрăпа ташă ушкăнне куракансем çав тери тăвăллăн алă çупса йышăннă.

Уявран кашни ушкăн дипломсемпе таврăннă. Пирĕннисем те парăмра юлман. Вĕсем Нурлатсене хамăр район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ячĕпе парнесем парса хавхалантарнă. «Çак уява хутшăнни пирĕншĕн питĕ усăллă пулчĕ», – терĕç каялла тулли кăмăлпа таврăннă артистсем. Вĕсем хăйсене çакнашкал уява илсе кайса килнĕшĕн Москакассинчи информаципе культура центрĕн ертӳçине Г. Голубевăна, «Шуçăм» юрăпа ташă халăх ушкăнĕн пуçлăхне Р. Семенова, ташăсем лартакан И. Петровăна тав тăваççĕ.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Çĕнĕлĕх

## Пуйăспа Мускава «вĕçĕпĕр»

Массăллă информаци хатĕрĕсем пĕлтернĕ тăрăх «Мускав – Владимир – Чулхула – Шупашкар – Хусан» маршрутпа пысăк хăвăртлăхлă пуйăссем çӳреме пуçламалла. Ăна тума укçа-тенкĕне 2014 çулхи федераци бюджетĕнче палăртаççĕ. Проект 928 млрд тенкĕ тăрать.

Çĕнĕ пуйăспа Хусантан Мускава 3,5 сехетре çитмелле пулать. Палăртмалла, пысăк хăвăртлăхлă магистраль пирĕн район урлă та иртет.

Çĕнĕ магистрале 2018 çулта пирĕн çĕр-шывра иртекен тĕнчери футбол чемпионачĕ тĕлне хута яма палăртаççĕ.

Каярахпа çак маршрута Екатеринбург хулине çити тăсаççĕ. Çул тăршшĕ пĕтĕмпе 1595 çухрăмпа танлашать. Ун чухне Екатеринбургран Мускава 8 сехетре çитме май пулать.

## Çĕнтерӳпе таврăнчĕç

Июнĕн 26 – 30-мĕшĕсенче çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» республикăри вăййисем иртрĕç. Пирĕн район чысне унта Мăн Сĕнтĕрти çамрăк армеецсен «Орленок» команди, Муркашри вăтам шкулти вĕренекенсен «Зарница» команди тата «Родина» çарпа патриот клубĕ хӳтĕлерĕç.

В. Львов ертсе пыракан «Родина» юлашки çулсенче республикăра яланах малта. Кăçал та çак клуб республика çĕнтерӳçи пулма тивĕçрĕ. Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулта вĕренекенсем те малтисен йышне кĕме пултарнă: И. Семенов ертсе пыракан хастар ачасен «Орленок» команди виççĕмĕш вырăна тухнă.

Прокуратурăран

## Координаци канашĕ иртрĕ

***Июнĕн 27-мĕшĕнче районта право йĕркине сыхлакансен координаци канашлăвĕ иртрĕ. Кун йĕркинчи тĕп ыйту наркотик хатĕрĕсемпе усă курассине хирĕç кĕрешесси тавра пулчĕ. Асăннă канашлăва район прокурорĕ – координаци канашĕн ертӳçи С. Фирсов, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата ыттисем хутшăнчĕç.***

Ку тĕлĕшри пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе район прокурорĕн çумĕ Ю. Семенов паллаштарчĕ. Асăннă хатĕрсемпе суту-илӳ тунине право йĕркине сыхлакан органсен представителĕсен ятарлă ушкăнĕ Муркашпа Мăн Сĕнтĕр тата уйрăм предпринимательсен лавккисемпе аптека учрежденийĕсене тĕрĕсленĕ, йĕркене пăснă факт тупса палăртман. Иртнĕ çул наркотикпа суту-илӳ тунă 11 преступлени регистрациленĕ. Наркотик витĕмĕпе 3 преступлени тунă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта çул çитмен çамрăксемпе 46 лекци право темипе иртнĕ, рейда 32 хутчен тухнă. Пĕтĕмĕшле хакласан вара пурнăçлама палăртнă ĕçсем тивĕçлĕ шайра пулса çитейменни курăнать, вăл шутра наркомани профилактики, реабилитаци программи тата ыти те. Çавăнпа та кунта ведомствăсем хушшинчи тачă ĕçлĕ çыхăну кирлĕ.

Çынсен ответлăхĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тĕслĕхрен, мăкăнь ӳстерсе çак ӳсен-тăрана кăмăллакансене илĕртмелле мар, çакăн йышшисене асăрхасан пĕр тăхтаса тăмасăр йĕрке хуралçисене, ответлă ытти ĕçченсене шăнкăравласа пĕлтермелле. 39-20-12 тата 62-48-49 номерсемпе Чăваш Республикин прокуратурине шăнкăравласа наркотик хатĕрлени пирки, ăна йышăнакансем пирки пĕлтерме ыйтатпăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Кунта пахалăхлă продукци сĕнеççĕ

Çĕнĕ суту-илӳ çурчĕ



*Районта пурăнакансене иртнĕ эрнере Муркаш райповĕ черетлĕ парнепе савăнтарчĕ. Кунта «Три Гурмана» çĕнĕ лавкка уçăлчĕ, сутлăхра – Етĕрнери аш-пăш комбиначĕн продукцийĕ.*



– Пурнăç уттипе тан пырас пулсан тăтăшах çĕнĕлĕхсен шыравĕнче пулмалла. Çулталăк вĕçлениччен эпир татах та çĕнĕ хушма суту-илӳ точкисем хута яма палăртатпăр, çавăнпа та кунпа чикĕ лартмастпăр, – терĕ Муркаш райпо канашĕн председателĕ Б. Андреев ĕç-хĕлпе паллаштарнă май.

Черетлĕ объект хута кайни районшăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна çĕклеме вара пĕр миллион тенкĕ ытла тăкаклама тивнĕ. Çапах та хамăр патри продукцие ытти тăрăхран кӳрсе килнипе танлаштараймăн.

– Етĕрнери аш-пăш комбиначĕн продукцийĕ ырă ят çĕнсе илме ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ. Унăн пахалăхĕ те шанчăклă, хакĕ те туянакана тивĕçтерет – ют çĕршывран кӳрсе килни вара аякра тăтăр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хушма çĕнĕлĕхпе кăмăллă пулнине палăртса.

Муркаш райпо ĕçĕ-хĕлĕ республика шайĕнче малтисен ретĕнче. Çакна чылай кăтартупа Чăвашпотребсоюз правленийĕн председателĕ В. Павлов çирĕплетрĕ.

Кӳршĕ районпа Муркашсен ĕçлĕ хутшăнăвĕ çирĕп. Çулталăкăн пĕрремĕш çуррине кăна асăннă комбината 44 тонна выльăхчĕрлĕх ăсатнă, 48 тонна ытла таса продукци кӳрсе килнĕ. Çĕнĕ павильона вара эрнере виçĕ хутчен аш-пăш продукцийĕпе тивĕçтерме шантараççĕ. Савăнăçлă самантa хутшăннисене Муркаш райпо коллективĕ тутлă апат-çимĕçпе сăйларĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Еткерсем тӳлеве тивĕçеççĕ

Пенси

Кăçал çулталăк пуçланнăранпа вилнĕ çынсен хушăнакан пенсине вĕсен еткерçĕсене республикипе 8,9 миллион тенкĕ тӳленĕ. Ку вăл 2012 çулхи çав вăхăтринчен 3 хута яхăн нумайрах.

Тӳлевсем ӳсни – халăх хушшинче ăнлантару ĕçне анлăрах туса пынин кăтартăвĕ. 2013 çулта хăйсен вилнĕ тăванĕсен пухăнакан пенси укçи-тенкине илесси пирки 35 заявлени йышăннă, республикипе 1,1 пин ытла.

Вилнĕ çынсемшĕн ĕç паракан хăй вăхăтĕнче вĕсен пенсин пухăнакан пайĕ валли обязательнăй страховани взносĕсем тӳлесе тăнă пулсан, 1953 çулта çуралнă е çамрăкрах арçынсемшĕн тата 1957 çулта çуралнă е çамрăкрах хĕрарăмсемшĕн вĕсен еткерçĕсем укçатенкĕ илме пултараççĕ. Кунпа пĕрлех вилнĕ çын патшалăх пенси виçисене хушса финансласси программине хутшăннă пулсан та вăл миçе çулта пулнине пăхмасăрах пухăннă укçа-тенкĕне еткерçĕсем тивĕçеççĕ.

Енчен те гражданин пурăннă чухне хăйĕн пухăнакан пенси виçине кама парасси пирки Пенси фондне заявлени çырса панă пулсан, ăна унта кăтартнисем илме тивĕç. Кун пек заявленисем республикипе 49, районта сук. Заявлени çук чухне укçа-тенкĕне вилнĕ çыннăн еткерçĕсем тивĕçеççĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн пĕрремĕш черетри еткерсем шутне вилнĕ çыннăн ачисем, мăшăрĕ, ашшĕ-амăшĕ, иккĕмĕш черетри еткерсем шутне пиччĕш-шăллĕсемпе аппăш-йăмăкĕсем, аслашшĕсемпе асламăшĕсем, мăнукĕсем кĕреççĕ.

Вилнĕ çыннăн пенсин пухăнакан пайне илес тесен çын вилнĕренпе 6 уйăх иртиччен еткерçĕсен РФ Пенси фончĕн кирек хăш управленине е патшалăх тытăмне кĕмен пенси фондне (вилнĕ çыннăн укçитенки ку фондра пулсан) пырса заявлени çырса памалла. Енчен те асăннă срок иртсе кайнă пулсан ку ыйтăва суд урлă татса пама тивет.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

«Раççей 10» проект

# Пурте сасăлава хутшăнар

Июлĕн 1-мĕшĕнче «Раççей 10» конкурсăн черетлĕ 2-мĕш тапхăрĕ пуçланчĕ. Пĕрремĕш тур сасăлавĕн итогĕсемпе федерацин кашни округĕнчен уйрăмах паллă 10 вырăнĕ иккĕмĕш тура хутшăнма тивĕç пулнă. Чăваш Енрен ку тупăшăва Улатăрти Çветуй Троица Колокольни малалла тăсĕ. Пирĕн республикăран сĕннĕ объектсенчен уншăн чи нумай сасă панă. Халĕ сайтра унччен сасăланин итогĕсене пăрахăçланă, сасăлав çĕнĕрен иртет.

Хăвăра килĕшекен паллă вырăншăн икĕ мелпе сасăлама май пур – сайта кĕрсе е СМС хыпар ярса парса. СМС хыпара 1880 номер çине ямалла, объект номерне кăтартмалла. Улатăрти Çветуй Троица Колокольнин номерĕ – 19.

Пĕрре сасăланă чухнех виçĕ объектшăн та, пĕр объектшăн та сасăлама май пур. Формачĕ çапла: 19 2 52 е 19 19 19, цифрăсем хушшине пуш вырăн хăвармалла. СМС хыпар хакĕ 4 тенкĕрен иртмест, кунне темиçе хутчен те яма юрать. Иккĕмĕш тапхăр сасăлавĕ 2013 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче 12 сехетре вĕçленет.

Иккĕмĕш тур итогĕсемпе 80 претендентран 30 суйласа илеççĕ, вĕсем финала тухаççĕ. Çĕнтерӳçĕсем 10 юлаççĕ. Ку объектсен миниатюрисене Мускав облаçĕнчи ландшафт паркĕнче вырнаçтарĕç. Финал сентябрĕн 29-мĕшĕнче пулать.

Пирĕн республика туризмшăн илĕртӳллĕ регионсен шутне кĕресси пĕтĕмпех Чăваш Енре пурăнакансен активлăхĕнчен килĕ. Айтăр-ха проекта хутшăнса Чăваш Енри паллă вырăнсемшĕн сасăлар!

**Чăваш Ен информаци политикипе массăллă коммуникацисен министерстви.**

Ача амăшĕн капиталĕ

# Саккуна пăсни хакла ларĕ

Ача амăшĕн капиталне алăран укçан илессин тĕслĕхĕсене пӳлес тĕллевпе ятарлă мерăсем йышăннă. Ача пур çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсем çинчен калакан саккуна улшăнусем кĕртнĕ.

Çапла вара ача амăшĕн капиталĕпе усă курса çурт-йĕр туянма е тума илнĕ кредитсене (заемсене) парса татма усă курас енĕпе требованисене çирĕплетнĕ. Халĕ ăна банксем, потребительсен кооперативĕсем тата микрофинанс организацийĕсемпе ытти организацисем ипотекăпа килĕшӳ обязательствисене тивĕçтернĕ чухне кăна пама пултараççĕ. Кунсăр пуçне заем укçи-тенкине алăран памăç, заемщикăн банкри счечĕ çине кăна куçарĕç.

2007 çултан тытăнса «Ача пур çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсем çинчен» Федераци саккунĕ вăя кĕчĕ. Унпа килĕшӳллĕн çак вăхăта ача амăшĕн капиталĕпе усă курса районти 447 çемье пĕтĕмпе 152,8 млн тенкĕлĕх, республикипе 18 пин çемье пĕтĕмпе 6 млрд ытла тенкĕлĕх пурăнмалли çурт-йĕр кредичĕсене саплаштарнă.

Кунпа пĕрлех Пенси фончĕпе правăна сыхлакан органсем пĕрле çыхăнса ĕçленипе патшалăх укçи-тенкипе урăх тĕллевпе усă курма тăнă тĕслĕхсене тупса палăртма май килнĕ. Саккун вăя кĕнĕренпе 48 заявитель ача амăшĕн капиталĕпе пурăнма юрăхсăр çурт-йĕр туянма хăтланнă. Ача амăшĕн капиталне алăри укçана куçарассипе çыхăннă искасем суда 22 тăратнă. Паянхи куна 8 иска тивĕçтернĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Саламлатпăр



Çатракасси ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă çыннăмăра – **Елизавета Димитриевна ДИМИТРИЕВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Петровсемпе Трофимовсен çемйисем.**

Официально

**Об ограничении пребывания граждан в лесах, расположенных на землях лесного фонда на территории Чувашской Республики, и въезд в них транспортных средств**

В связи с установлением 4 класса пожарной опасности в лесах, расположенных на землях лесного фонда на территории Чувашской Республики, в целях обеспечения пожарной безопасности в лесах и руководствуясь статьями 11 и 53.5 Лесного кодекса Российской Федерации, Порядком ограничения пребывания граждан в лесах и въезда в них транспортных средств, проведения в лесах определенных видов работ в целях обеспечения пожарной безопасности или санитарной безопасности в лесах, утвержденным приказом Федерального агенства лесного хозяйства от 3 ноября 2011 г. № 471, Положением о Министерстве природных ресурсов и экологии Чувашской Республики, утвержденным постановлением Кабинета Министров Чувашской Республики от 26 октября 2011 г. № 486, приказываю: ограничить с 28 июня по 18 июля 2013 г. пребывание граждан в лесах, расположенных на землях лесного фонда на территории Чувашской Республики, и въезд в них транспортных средств.

**Министр природных ресурсов и экологии Чувашской Республики И. ИСАЕВ.**

# Çулсем çинче – çĕнĕ паллă

Водительсем валли



Кăçалхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса Раççей çулĕсем çинче çĕнĕ знак вырнаçтарма тытăнаççĕ. Вăл водительсене фотовидеофиксаци камери пирки асăрхаттарма тивĕç. Кун пиркиех çул-йĕр палли те пĕлтерĕ.

Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕнчен хыпарланă тăрăх табличка та, çавăн пекех çул-йĕр палли те водительсене асăннă çул участокĕнче административлă майпа право йĕркисене пăснине автоматла режимпа фиксацилекен ятарлă техника хатĕрĕсем, видео е фото мелĕпе çырса-ӳкерсе илекен устройствăсем вырнаçтарни çинчен пĕлтерĕç.

Ведомствăра çапла ăнлантарса панă. Çул-йĕр палли çул-йĕр знакĕпе пĕрле те, уйрăм та пулма пултарать. Ку вăл çул категорине кура çул çӳрессин ятарлă условийĕсемпе тата вырăнпа çыхăннă.

Асăрханулăх

# Ултав серепине ан лекĕр

Тăтăшах вăл е ку микрофинанс организацийĕ кивçен укça илме йыхравлать. Халăх шанăçне кĕрес тесе хăйсем пирки тĕрлĕ пĕлтерӳ кăларать. Укçатенкĕ йывăрлăхне лекнĕ çынсем вара шалуччен пурăнма 10 – 30 пин тенкĕ кивçен укça илме вĕсем патне утаççĕ.

Пĕчĕк финанс организацийĕсем Раççей рынокĕнче юлашки 5 – 7 çул хушшинче ытларах вăй илчĕç. Вĕсен ĕç-хĕлне йĕркелеме май паракан Федераци саккунне 2010 çулта йышăннă. Çак тапхăртан пуçласа вĕсем татах та хастартарах ĕçлеме тытăнчĕç. Пĕчĕк финанс организацийĕн çулталăкри процент ставки паянхи кун вăтамран 720 процентa танлашать. Е тепĕр майлă каласан вĕсен тупăшĕ кашни тенкĕрен 720 хут ӳсет. Анчах та укça кивçен илме пыракана вĕсем çакăн çинчен пĕлтерме васкамаççĕ. Çавна пула чылай çын пысăк парăма çакланать. Банксенчи кредитпа танлаштарсан кунта пĕчĕк займăн процентĕ çав тери пысăк, çакна пурин те пĕлмелле. Укça кивçен сĕнекен финанс организацийĕн пулăшу памалли условийĕсемпе паллашмасăр вĕсемпе çыхланмалла мар. Яваплă утăм тăвиччен кашнинех Интернет сетьне кĕрсе укça суйласа илнĕ организаци ĕçĕ-хĕлĕпе паллашăр. Çавăн пекех кивçен илме палăртнă укçатенкĕшĕн каялла мĕн чухлĕ тӳлемелле пулассине çине тăрса ыйтса пĕлĕр. Пĕчĕк финанс организацийĕсене укça хывакансен ăна укçатас хăрушлăх пысăк, мĕншĕн тесен вĕсен капиталне никам та тĕрĕслемест.

Кредит организацийĕсен капиталĕ 2012 çултан пуçласа 180 миллион тенкĕрен пĕчĕк пулмалла мар. Çавăн пекех асăннă йышши финанс организацийĕсем кивçен панă укça-тенкĕ калăпăшĕ 1 миллион тенкĕрен ытла пулмалла мар. Вĕсен ют çĕр-шыв укçи-тенкипе ĕçлеме ирĕк çук.

Кивçене вăхăтра тата процентпа тавăрса паман çынсене асăннă йышши организацисем коллекторла фирмăсем урлă шыраса илме, çавăн пекех «Персоналлă сведенисем» çинчен калакан Федераци саккунне хирĕçле утăмсем тума пултараççĕ. Çавăнпа та кунта васкама кирлĕ мар, укça кивçен иличчен малтан ыттисемпе канашласа пăхăр.

**Н. ПЕТРОВА,**
**Роспотребнадзор управленийĕн эксперт специалисчĕ.**

# Хуçалăхра та, килте те ĕçрен ютшăнман

Тăрăшуллă ентешсем



55 çул каяллахи пекех хĕвел самай çӳлте тăнă вăхăт. Шăпчăк юррипе тата куккук çул шутланипе тулнă чи вăрăм кунсемпе кĕске каçсем ял çыннине çывăрма та вăхăт хăвармаççĕ. Шăрăх хуçаланакан тавралăха талккишпех утă шăрши сарăлнă. Улăхçаранти симĕс курăк çинче ĕне кĕтĕвĕсем кун кунлаççĕ, пĕве-кӳлĕ хĕрринче ача-пăча шыва кĕрсе савăнать. Çут çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ тесе хаклассăм килет çуллахи çак тапхăра. Кунашкал хитре вăхăтра Турă пилленипе илемлĕ çынсем çеç çуралаççĕ.

Исетерккĕ. Ялта ватти-вĕтти – йăлтах вылăх апачĕ янтăлассипе вăй хунă тапхăр. Уяр кунăн кашни саманчĕпе туллин усă курса юлмалла-çке çак вăхăтра. Ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне уй-хир бригадирĕнче тата ферма заведующийĕнче ĕçленĕ Петр Арсентьевичпа унăн мăшăрĕ хуçалăх ферминчи тĕрлĕ ĕçсенче тимленĕ Лидия Давыдовна та хăйсем пĕрремĕш ача кĕтнине пăхмасăрах ĕçе иккĕмĕш вырăна хăварса лармаççĕ. Хăйсем ĕçлемесен çӳлтен пăрахса памасса ăнланать çамрăк мăшăр.

Çĕртме уйăхĕн 17-мĕшĕнче пĕрремĕш ача Людмила çуралсан та ашшĕ-амăшĕ ĕçрен канма васкаман. Шутланă-и вĕсем ун чухне хăйсен çемйинче çичĕ ача пулать тесе. Çук пулĕ, анчах Турă панинчен те иртмен. «Ачасен тăванĕсем ытларах пулсан хăйсене пурăнма çăмăл пулĕ», – шутланă арçынпа хĕрарăм. Çапла вара çулсем иртнĕçемĕн сĕтел хушшине çичĕ ача (2 ывăлпа 5 хĕр) ларма пуçланă. Мĕнле савăннă-тăр вĕсем çине пăхса çĕр ĕçĕпе пурăнакансем ун чухне: пурăна-киле пурте çурла тытма пуçласан вĕсен хирти каçалăкĕ те çынсенчен кая юлмĕ-ха...

Çулсем иртеççĕ, ачасем ӳсеççĕ, пурнăç улшăнать. Кун-çул уттинчен юлмасăр пурăннă Петрпа Лидия та ачисем шкулта вĕреннĕ вăхăтра вĕсене çурла ĕçĕнчен уйăрса ял хуçалăхне, халăх хуçалăхне кирлĕ пĕлӳ илтерессипе пуç ватма пуçлаççĕ. Вĕсен ĕмĕчĕ пурнăçланать: вăхăт иртнĕçемĕн 4 ачи аслă пĕлӳ илет, 3-шĕ – ятарлă вăтам пĕлӳллĕ специалистсем пулса тăраççĕ.

– Паян хамăн пурнăçа тишкерсе хаклатăп та вылăх-чĕрлĕхе юратасси, вĕсен сывлăхĕшĕн тăрăшасси ачалăхра атте патне фермăна сĕт ĕçме çӳренинчен пуçланчĕ тесе пĕтĕмлетӳ тăватăп, – йăл кулă парнелесе калаçать Людмила Петровна. – Çемьере хам асли пулнă май фермăра та, килти хушма хуçалăхра та атте-аннене пулăшасси час-часах мана тиветчĕ. Ачаранах вылăхран хăраман эпĕ, тислĕк шăршинчен ютшăнман. Çакă манăн ĕç пурнăçĕн никĕсĕ пулчĕ пулас.

Çемьери аслă хĕр 1973 çулхине Сосновка шкулĕнче 8 класс вĕренсе пĕтерсен кĕркунне Вăрнарти ял хуçалăх техникумне вылăх тухтăрне вĕренме каять. Ачаранах ĕçе çывăх пулнăскер вĕренӳре те ĕлкĕрсе çеç пырать вăл. Тăватă çултан патшалăх экзаменĕсене ăнăçлă тытса ветфельдшер дипломĕпе çамрăк специалист района килет. Вылăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци ырă малашлăх шантаракан хĕре «Ударник» хуçалăха ĕçлеме ярать.

– Тăван енре пулсан та çĕнĕ коллективчĕ, анчах ĕçе юратни çав çĕнĕлĕхе те хăвăрт алла илме пулăшрĕ. Çитменнине Кивĕ Матьăк каччипе Владислав Михайлович трактористпа 1977 çулхи кĕркунне кунтах хамăрăн çемьене йĕркелесе ятăмăр. Шăпа хама çак çулпа илсе кайнăшăн эпĕ паян пĕртте кулянмастăп, – çепĕççĕн калаçать 2 ывăлпа пĕр мăнук пуррине палăртса ĕç ветеранĕ. – Паян мăшăрăм килти хушма хуçалăха аталантарассипе тĕллевлĕ вăй хуни – çемье бюджечĕн тĕрекĕ. Тавах ăна уншăн.

Пурăннă май пурнăç çулĕ хăех уçăлса пырать çав. Çемье çавăрнăранпа 20 çул иртсен Людмила Петровна куçăмсăр майпа Хусанти ветеринари академийĕнчен вĕренсе тухать. Унтанпа вăл «Ударник» хуçалăхăн тĕп ветврачĕ тата юлашки çулсенче пĕр вăхăтрах Йӳçкассинчи ветеринари участокĕн ертӳçи. Ăста специалист вылăх сывлăхĕшĕн вăхăтра тăрăшса, ял çыннисемпе ăнлантару ĕçĕсем тăтăш ирттерсе хуçалăхра та, ялсенче те хăрушă чирсен çулне ура хурсах пырать. Ку вара уйрăм хисепе тивĕç.

– Пĕрлешӳллĕ хуçалăхрисĕр пуçне юлашки çулсенче ял çыннисем килти хушма хуçалăхра та вылăх-чĕрлĕх йышлă тытма пуçларĕç. Ку вара вылăх тухтăрĕн ĕçне анлăлатрĕ. Çакна ăнланса килти хушма хуçалăхри вылăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк тĕлĕшпе те ытлă-çитлĕ тимлĕх уйăрма тăрăшатпăр, – терĕ Людмила Петровна сăмахăмăр вĕçĕнче хăйĕн хушма хуçалăхĕ те вылăх-чĕрлĕхрен катăк пулманнине палăртса.

Çичĕ ачаллă çемьере çуралса ĕçрен ютшăнмасăр ӳснĕ Л. Платонова вылăх тухтăрĕ тăрăшуллă ĕçĕпе хуçалăхăн, районăн, республикăн Хисеп грамотисене тата халăхăн ырă сăмахне сахал мар тивĕçнĕ. Сăмах çакăн çине çитсен вылăх тухтăрĕшĕн тĕп парне вăл сывă вылăх пулни палăрчĕ.

Çак кунсенче тивĕçлĕ канăва тухакан тата çиччĕ виççе калаçакан вылăх тухтăрне хирĕçлеме çук. Çамрăксем унран тĕслĕх илессе кĕтмелли çеç юлать. Çапла пултăрччĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

«Россельхозбанк» пĕлтерет

# «Садовод» – пахчаçăсем валли кăна мар

– «Садовод» кредитпа кирек кам та усă курма пултарать: пахча ĕрчетекенсем те, дача участокĕ пуррисем те, çакăн пек участок илме хатĕрленес текенсем те. Çак кредит асăннă категорие кĕрекенсемшĕн пурнăçăн кирек мĕнле лару-тăрăвĕнче те пĕрремĕш пулăшакан вырăннех. Ытти тĕрлĕ кредитсемпе танлаштарсан «Садоводăн» процент ставкисем те пĕчĕкрех – çулталăкра 16 процентран пуçласа. Кредитпа анлă усă курма май пур, – пĕлтерет «Россельхозбанкăн» Чăваш Енри филиалĕн вак суту пайĕн пуçлăхĕ Светлана Павлова.

Кăçалхи пилĕк уйăхра кăна «Россельхозбанкăн» регионти филиалĕнче «Садовод» кредит илнисен шучĕ 2,4 хут пысăкланнă. Çакăнпа пĕрлех илнĕ кредитсен пĕтĕмĕшле сумми те 3,3 хут ӳснĕ – 21,2 миллион тенкĕпе танлашнă.

**Çак кредита кам илме пултарать-ха?** Раççей Федерацийĕн 18 çултан пуçласа 65 çулчченхи гражданĕсем çак кредита пилĕк çулччен илме пултараççĕ. Нимĕнле хушма комиссипе тӳлевсем те тытса юлмаççĕ. Илме пултаракан кредитăн чи пысăк сумми – 1,5 миллион тенкĕ. Кредит илнĕ чух пĕрре е ытларах поручитель – уйрăм çын (кредит 300 пин тенкĕрен пысăкрах пулсан – икĕ поручительтен сахал мар) кирлĕ, е тата юридици сăпачĕллĕ çын та поручитель пулма пултарать, е пурлăха салуклама та юрать. Виçĕ çулччен тӳлесе татма палăртнă кредита унăн тĕллевне çирĕплетмесĕрех илме пулать (çак вăхăтри нушасене тивĕçтерме). Кредита, паллах, виçĕ çултан каярах тӳлесе татмалăх та илме юрать, кун пек чухне вара кредита пахча е дача участокĕсенчи пурăнмалли çурт-йĕре реконструкцилеме е унта юсав ĕçĕсем ирттерме, дача е пахча туянма, вăл шутра çав участоксем çинчи çуртпа пĕрле туянма е участокра пӳрт туса лартма параççĕ. «Садовод» питĕ меллĕ кредит – усă курăр!

**Н. НИКОЛАЕВА**
**хатĕрленĕ.**

# Çул-йĕр правилисене вĕрентетпĕр

Раççей çул-йĕрĕ çинче автотранспорт йышĕ ӳссех пырать, шел пулин те, унпа пĕрлех – инкексен хисепĕ те. Уйрăмах ачасем суранланни, унтан та хăрушăраххи вĕсен кун-çулĕ вăхăтсăр татăлни питĕ пăшăрхантарать. Çавăнпа та кунта çул-йĕр правилине тата инкек-синкекрен сыхланма пĕлни, çул-йĕр çинчи лару-тăрупа маларахах паллашни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Апла пулсан кулленхи пурнăçра пирĕн ача-пăчашăн урам, çул-йĕр хăрушлăх кăларса ан тăратчăр тесен мĕн тумалла-ха? Эпир, «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕсем, ку тĕлĕшпе кулленех сахал мар ĕç туса ирттеретпĕр. Çул-йĕр правилине, ытти саманта ачасем яланлăхах асра тытчăр тесе тĕрлĕ калаçу, вăйă, кăтарту йĕркелетпĕр.

Акă эпир ачасемпе пĕрле урам мĕлкине ăсталарăмăр. Сĕтел çинчи вăйăпа усă курнă май вĕсем çуран утмалли тата автотранспорт çӳремелли çула, çавăнпа пĕрлех ку тĕлĕшри йĕркене, вăл шутра урам урлă каçмалли саманта уйăрма пултараççĕ. Паллах, çакă пĕр кун кăна туса ирттермелли ĕç мар, çавна шута илсе пирĕн воспитательсем тăтăшах ку енĕпе тимлеççĕ. Ачасене уçăлма илсе тухсан та мĕн пĕлни асра юлтăр тесе тăрăшаççĕ. Ачасене çул-йĕр правилисемпе иртерех паллаштарнин пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк.

**Т. НИКОЛАЕВА,**
**воспитатель.**

Çу кунĕсем инкексĕр иртчĕр

# Пушартан кашнин асăрханмалла

***Пурнăçра чылайăшĕ час-часах çӳлтен паракан пулăшăва кĕтсе харпăр хăй тимлĕхĕ пирки манса каять. Хыççăн вара чавса çывăх та çыртма çук. Çакăн çинчен сăмах тапратрăмăр та ĕнтĕ кăçалхи пĕрремĕш çур çулхи лару-тăрăва хакланă май патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн аслă инспекторĕпе К. ПОПОВПА.***

– **Константин Геннадьевич, кăçалхи январь – июнь уйăхĕсем мĕнле иртрĕç?**

– Пушар хуралĕшĕн пĕрремĕш çур çул унчченхи çулсемпе танлаштарсан йывăррисенчен пĕри пулчĕ. 2012 çулпа пăхсан кăçал пушар тухаслăх та, вут-çулăм кӳнĕ тăкак та чылай ытларах пулчĕ: инкексем 17-рен 24-а çитрĕç, пурлăх кĕлленесси 3 хут ытла ӳсрĕ. Пĕлтĕр ирĕке кайнă вут-çулăмра 3 çын пурнăçĕ татăлнăччĕ пулсан, тавах Турра, кăçал кунашкал тĕслĕхсем пулмарĕç. Анчах çулăмра 3 çын пиççе кайса больницăна лекни пушар хăрушсăрлăх правилисене пурин те пĕр турткаланмасăр пурнăçламалли пирки калать.

Утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне кăçал район территорийĕнче 24 пушар регистрацилерĕмĕр. Иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарса пăхсан вут-çулăм алхаснă инкексен хисепĕ 7 тĕслĕх нумайрах.

Кил-çурт таврашĕнчи пушар нумай чухне хуçисем унран сыхланмалли правилăсене пăхăнманнинчен вăй илет, пиншер-миллионшар тенкĕлĕх пурлăха самантра кĕл туса тухса каять.

– **Халĕ каланине уйрăм тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парăр-ха.**

– Хулара пурăнакан хĕрарăм çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче Оринин ял тăрăхĕнчи Мулкачкасси ялĕнчи масар çине килсен хуçасăр ларакан тăван килне те кĕрсе тухма шутланă. Унта хутран-ситрен çеç пулнăран-ши, çурт-йĕр таврашĕнчи электрохуçалăх çине «алă сулнă» пулнă. Çапла вара асăннă кун çамрăк хĕрарăм киле кĕрсен электричество кăмаки чĕртет. Хуçи айккинелле пăрăнсан электроплита «хĕрлĕ автана» çул парать. Кил хуçи тата ял çыннисем инкеке вăхăтра асăрханă пулин те хăрушлăха сирсе ярайман. Пушар хуралĕ çитнĕ çĕре инкек хăйĕннех тăвать: пӳрт талккишпех çулăм ытамне кĕрсе ӳкет. Шутлă вăхăтра вырăна пырса çитнĕ пушар хуралĕн ĕçченĕсем çине тăнипе çулăма пӳртпе юнашар ытти çурт-йĕр çине ямарăмăр, вĕсене сыхласа хăвартăмăр.

Ака уйăхĕн 28-мĕшĕнче 4 сехет те 44 минутра пирĕн патăмăра Хунтăкассинче пурăнмалли çуртра пушар тухни пирки пĕлтерчĕç. Инкекпе кĕрешме Муркашри пушар хурал машинипе пĕрлех Мăн Сĕнтĕрти тата Шомикри уйрăм постсен пушар машинисене кăлартăмăр. Пулăшу вăхăтра çитрĕ пулин те, йывăç çурт тĕппипех кĕлленчĕ. Çулăм витĕр кил картине тухнисем виççĕн аллисем тата пит-куç пиççе кайнипе больницăна лекрĕç.

– **Çуллахи вăхăтра пушарсем тухассине сахаллатас тĕллевпе РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕ çу кунĕсенчи чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата пĕтерес, халăха пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес енĕпе тĕллевлĕ ĕçлесе пырать. Кун пирки сирĕн шухăшсем еплерех?**

– Пушартан асăрханасси тата ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешесси ача вăййи мар. Çавăнпа та пушар хăрушсăрлăхĕпе тĕрлĕ вĕренӳсем ирттерсе пушар хăрушсăрлăх правилисене халăх патне çывăхарах çитерме тăрăшатпăр. Çакна вĕренӳ çулĕн юлашки кунĕсенче Муркашри вăтам шкулта вĕренекен тата «Лесная сказка» ача-пăча санаторийĕнче канакан-сывалакан ачасемпе çу кунĕсенчи пушар хăрушсăрлăхĕпе вĕрентӳ ирттерни пирки те калайратăп. Çу кунĕсенче организацисемпе предприятисенче çуллахи пушар хăрушлăхĕпе ĕçсене вăхăтра пурнăçламалла.

Инкексен калăпăшне пĕчĕклетме пурсăмăрăн та пĕрле ĕçлемелле. Ытларах чухне вут-кăвар мунча кăмакисемпе мăрйисем юсавсăр пулнипе, килти электрохуçалăх «ватăлнипе», ӳсĕрле пирус туртнипе вăй илнĕ.

– **Эпĕ шутланă тăрăх пулнă инкексем ăнсăрт пулăмсем мар. Вĕсенчен асăрханма пĕлтĕр мĕн туса çитерейменĕмĕр эпир тата малашне ку тĕлĕшпе мĕн тумалла?**

– Паллах, ăнсăртран мар. Акă кăçал район территорийĕнче пулнă 24 пушартан 18-шĕ – çынсен килти хуçалăхĕсенче. Мĕнреха вĕсен сăлтавĕ? Эпир тăвакан анализ çакна кăтартать: усă çулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулнипе – 4, электрооборудование эксплуатацилес правилăна пăснипе – 11, кăмакасемпе мăрьесем юсавсăр пулнипе – 3, ӳсĕрле пирус туртнă чух тимлĕхе çухатнипе 5 пушар тухнă.

– **Кăçал халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче те вут-кăвар алхасни нумайăшне сисчĕвлентерчĕ. Хушса мĕн калайратăр?**

– Вырăнти самоуправлени çинчен калакан федераци саккунĕ ял тăрăхĕсене пушар хăрушсăрлăх çине çирĕпрех пăхма ыйтать. Çакă вăл пушар хуралĕ тытса тăрасси, агитаци ĕçне ирттересси, эрех-сăрапа иртĕхекенсен çемйисене тата пĕччен пурăнакансене шута илесси. Юлашкинчен асăннисен списокне туса вĕсене районти шалти ĕçсен пайне, патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмне çитерсе парсан лайăх пулмалла. Кунпа пĕрлех ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен асăннă çынсен хуçалăхĕсене тĕллевлĕ тĕрĕслесе тăма график туни те пушар çулне пӳлĕччĕ.

Сирĕн ыйту çине хуравласа çакна калатăп. Халăх йышлă пухăнакан вырăнсенче кăçал икĕ пушар пулчĕ. Вĕсем: арçынсен Каршлăхри Александр Невский ячĕллĕ православи мăнастирĕнче тата Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта.

– **Константин Геннадьевич, калаçăва вĕçленĕ май хăвăрăн сĕнĕвĕрпе паллаштарăр-ха.**

– Ашшĕ-амăшĕсем! Ачасем шăрпăк тытасран, вĕсем аслисем çук чухне электричествăпа усă курмалли приборсем патне пырасран тата газ плитисемпе усă курасран асăрханăр. Ачасем умĕнче пирус туртса вĕсене тĕслĕх ан кăтартăр! Ӳсĕрле пирус туртакансене инкек пирки асăрхаттарăр.

**А. БЕЛОВ**
**калаçнă.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**ООО «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района объявляет открытый конкурс по привлечению подрядных организаций для выполнения работ по капитальному ремонту многоквартирных домов в 2013 году.**

| Номер лота | Виды работ | Начальная (максимальная) цена договора, руб. |
|---|---|---|
| Лот №1 | Капитальный ремонт кровли дома №14 по ул. 50 лет Октября с. Моргауши | 951598 |
| Лот №2 | Капитальный ремонт фасада и подвала дома №14 по ул. 50 лет Октября с. Моргауши | 181505 |
| | всего | 1133103 |
| Лот №3 | Капитальный ремонт кровли дома №28 по ул. Ленина с. Моргауши | 1195045 |
| Лот №4 | Капитальный ремонт внутридомовых инженерных систем (водоснабжения и электроснабжения) дома №28 по ул. Ленина с.Моргауши | 415504 |
| | всего | 1610549 |
| Лот №5 | Капитальный ремонт кровли дома №22 по ул. 50 лет Октября с. Моргауши | 1195045 |
| Лот №6 | Капитальный ремонт внутридомовых инженерных систем (водоснабжения и электроснабжения) дома №22 по ул. 50 лет Октября с. Моргауши | 415504 |
| | всего | 1610549 |
| Лот №7 | Капитальный ремонт кровли дома №35 по ул. Центральная с. Юнга | 1195045 |
| Лот №8 | Капитальный ремонт фундамента дома №35 по ул. Центральная с. Юнга | 172443 |
| Лот №9 | Капитальный ремонт внутридомовых инженерных систем (водоснабжения и электроснабжения) дома №35 по ул. Центральная с. Юнга | 415504 |
| | всего | 1782992 |

Участники конкурса предоставляют обеспечение заявки до даты вскрытия конвертов с заявками.
Планируемая дата начала работ: август 2013 г.
Планируемая дата окончания работ: октябрь 2013 г.
Прием заявок осуществляется по адресу: Чувашская Республика, с.Моргауши, ул.Гагарина, д.10а. Часы работы: понедельник-пятница с 8.00 до 17.00, обед с 12.00 до 13.00.
Дата и время окончания приема заявок: 05.08.2013 г. до 10 час. 00 мин.
Дата вскрытия конвертов: 05.08.2013 г. в 10 час. 30 мин.
По всем вопросам обращаться в комиссию по адресу: с. Моргауши, ул. Гагарина, д.10а, тел.62-2-43, 63-4-30, 63-0-65.
Подробная информация размещена на официальном сайте администрации Моргаушского района http://gov.cap.ru/default.aspx?gov_id=71.

**На АЗС Сиб-Нефть требуется наполнитель газовых баллонов. Сменный режим работы, достойная заработная плата. Тел.: 69799.**

**Чувашская Республика Моргаушский район**
**Глава Большесундырского сельского поселения**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**01.07.2013г. № 6**
село Большой Сундырь

**О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка».**

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации» и ст. 14 Устава Большесундырского сельского поселения Моргаушского района

**ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правого акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» с кадастровым номером 21:17:051002:157 03 июля 2013 года в 18 часов 00 минут по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Большой Сундырь, ул. Советская, 16.

2. Настоящее решение подлежит официальному опубликованию в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава Большесундырского сельского поселения А.В.Лаптев.**

**Проект муниципального правового акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка».**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний администрации района постановляю:

Изменить вид разрешенного использования земельного участка с кадастровым номером 21:17:051002:157 , из категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, д. Шупоси, с разрешенного использования «для ведения личного подсобного хозяйства» общей площадью 61 кв. метров на вид разрешенного использования «для строительства и содержания магазина».

С предложениями по проекту муниципального правого акта «Об изменении вида разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Болшесундырского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 22.07.2013 года до 9-00 часов.

**Глава Большесундырского сельского поселения А.В. Лаптев.**

## Администрация Моргаушского района сообщает о предоставлении земельных участков

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070605:82, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 5211 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:100201:93, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6015 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №312, 313 и 316, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефоны для справок: 8(83541) 62-2-66, 62-5-99, 62-7-47.

* * *

**Тăваткал тюкланă кăçалхи утă сутатпăр.**
**Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90. 1-2.**

**В связи с открытием АЗС требуется персонал: операторы, заправщики, дворники, уборщицы. Стабильная компания, достойная заработная плата. Тел.: 69799.**

Администрация Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики сообщает, что открытый аукцион, проведенный 28.06.2013 года (объявленный 29.05.2013 года в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» № 37 (8103) на право заключения договора аренды по объектам недвижимого имущества «Комплекс водоснабжения», находящегося в муниципальной собственности Юськасинского сельского поселения, признан несостоявшимся в связи с наличием только одной заявки.

Полную информацию об итогах аукциона можно получить в администрации Юськасинского сельского поселения Моргаушского района, расположенной по адресу: с. Юськасы ул. Центральная, д.58. Тел.: 60-7-51.

## Тав тăватпăр

Катькас ялĕнче пурăннă Василий Аверкиевич Серова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн пысăк хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн ЗАО «Сеспель» пĕрлешӳре пĕрле ĕçленĕ тус-юлташĕсене, Мăн Сĕнтĕр райповĕн правленине, çакăнта ĕçлекенсене, кӳршĕсене, ял-йыша, тăвансене, пĕрле вĕреннĕ тус-юлташĕсене, кӳршĕ ял çыннисене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тав тăватпăр. Вĕсене пурне те вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатпăр.

**Амăшĕ, мăшăрĕ, ачисем, шăллĕсемпе кинĕсем.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 8-25.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 8-10.**

**Цифровое спутниковое телевидение**
**ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб.**
**Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-20.**

**Вырăнта пурăнмалли çурт хуралтăсемпе пĕрле сутатпăр. Газ кĕртнĕ. Хакĕ калаçса таталнă тăрăх.**
**Тел.: 8-960-301-92-05.**

* * *

**СРОЧНО требуются рабочие для сбора клубники около д. Шомиково Моргаушского района.**
**Тел.: 8-903-357-54-94.**

* * *

**Продаю ячмень.**
**Тел.: 8-906-388-66-66.**

* * *

**Продаю корову.**
**Тел.: 8-919-670-09-99.**

* * *

**Требуется продавец.**
**Тел.: 8-927-857-96-72; 9-927-665-13-72.**

* * *

**Продаем земельный участок 23 сот. в с. Б. Сундырь по ул. Анисимова. Тел.: 8-967-47-000-38. 7-10.**

* * *

**Январь уйăхĕнче пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ăратлă ĕнен тынашкине сутатăп. Катькас ялĕ.**
**Тел.: 8-917-662-90-44; 65-6-14. 1-2.**

* * *

**Продаю ячмень, овес.**
**Тел.: 8-906-381-22-99.**

* * *

**1–2 уйăхри килти хуçалăхри сысна çурисем сутатпăр. Хакĕ 1500–1800 тенкĕ. Тел.: 8-960-311-22-86. 5-5.**

* * *

**Продаются березовые дрова 5 куб.м.**
**Тел.: 8-903-065-58-68. 1-2.**

* * *

**Куплю пух-перо новое и старое.**
**Тел.: 8-903-379-01-23.**

* * *

**Оказание юридических услуг. Составление исковых заявлений. Представительство в судах.**
**Тел.: +79603035359.**

* * *

**Продаем КИРПИЧ керамический облицовочный, блоки крупноформатные керамические по ценам завода-изготовителя. Скидки и специальные предложения. Доставка. Тел.: 8(8352)24-22-38, 24-22-28. 2-5.**

* * *

**ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ.**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 1-10.**

* * *

**Продаю ОПГС (гравмасса), песок.**
**Тел.: 8-905-199-69-33. 1-19.**




**Производственный цех, с. Моргауши, ул. Гагарина, 16 а (здание котельной).**

**Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка.**
**Тел.: 8-903-065-60-58. 5-22.**




**Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Технониколь» – 530 руб.; гипсокартон – 185 руб.; фанеру влагостойкую 9 мм; профнастил оцинк. 2 м – 400 руб., профнастил крашеный 2 м – 480 руб.; сухие смеси, цемент М-400 – 170 руб., М-500 – 230 руб.; сайдинг; двери, поликарбонат.**
**Тел.: 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 8-10.**

**Услуги буровой машины для бурения колодцев разного диаметра с доставкой и установкой колец. Тел.: 8-903-379-09-01. Вячеслав. 1-10.**



7-10.

**Продаются одно- и двухкомнатные квартиры от 50 кв. м. в трехэтажном кирпичном доме с индивидуальным отоплением. В подвале бесплатные кладовые. Цена от 25000 руб. за 1 кв. м. Возможна рассрочка. Адрес.: с. Большой Сундырь, ул. Анисимова. Тел.: 8-967-470-00-38.**

**Нискассинчи машинăпа трактор паркĕн территорийĕнче йӳнĕ хакпа çак строительные материалсене сутатпăр: ТĔРЛĔ ВИÇЕЛЛĔ ЙЫВĂÇ БРУСОКСЕМПЕ ХĂМАСЕМ, М-400 ЦЕМЕНТ, КЕРАМБЛОКСЕМ, КАРТА ХĂМИСЕМ. Çак материалсене заказпа илсе килетпĕр: ТĔРЛĔ ПРОФНАСТИЛ, ПРОФИЛЬСЕМ, ОБЛИЦОВКА ТУМАЛЛИ КИРПĔЧ, ОЦИНКОВКА ЛИСТАСЕМ, ХĂЙĂР.**
**Тел.: 8-927-857-49-21. 7-10.**

Коллектив архитектурно-проектной организации «Инттехс» выражает соболезнование главному редактору газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» А.И. Тихонову в связи со смертью матери

**ТИХОНОВОЙ**
**Юлии Гордеевны.**

Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ кунта завучра вăй хуракан М.В. Митрофановăн

**АШШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни пирки пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | среда 3 июля | | | | четверг 4 июля | | | | пятница 5 июля | | | | суббота 6 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +16 | +23 | +28 | +21 | +16 | +23 | +26 | +20 | +15 | +25 | +30 | +23 | +18 | +25 | +27 | +22 |
| Давление мм | 747 | 748 | 748 | 748 | 749 | 750 | 750 | 751 | 751 | 751 | 750 | 750 | 750 | 750 | 749 | 748 |
| Влажность % | 82 | 50 | 29 | 59 | 81 | 46 | 35 | 60 | 78 | 45 | 32 | 62 | 87 | 59 | 46 | 69 |
| Ветер м/сек | 3 | 3 | 2 | 2 | 2 | 2 | 4 | 3 | 2 | 4 | 1 | 2 | 2 | 4 | 2 | 2 |
| | С | С | С-В | С-В | С-В | В | В | Ю-В | С-З | С-З | С | С-З | С-З | С-З | С-З | С-З |
| Солнце восход / заход | | 04:13 | 21:40 | | | 04:14 | 21:39 | | | 04:16 | 21:39 | | | 04:17 | 21:38 | |
| Луна восход / заход | | 01:09 | 17:04 | | | 01:39 | 18:06 | | | 02:14 | 19:01 | | | 02:58 | 19:49 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă служба Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 2.07.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4582.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.